27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
МАРТ
25
ШАМАТКУН
60 (6555) №.

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Совет Союзӗн Маршалне ЖУКОВА

УКРАИНӐРИ 1-МӖШ фронт ҫарӗсем, ТАРНОПОЛЬПЕ ПРОСКУРОВ участокӗнче тӑшманӑн мӗнпур контратакисене сирсе пӑрахса тата ҫав ҫапӑҫусенче нимӗҫсен контратака тӑвакан пехотнӑй тата танковӑй дивизийӗсене халран ярса, ҫак кунсенче тӑшман кӗтмен ҫӗртен хӑйсем наступлени тума тытӑннӑ та тӑшманӑн фронтне татса пӑрахнӑ.

Тӑватӑ кун хушши ҫапӑҫса наступлени туса пырса, Украинӑри 1-мӗш фронт ҫарӗсем 60 километртан пуҫласа 100 километра ҫити малалла куҫнӑ, операцисем тӑвас тӗлӗшпе паха чугун ҫул узелӗ пулса тӑракан ЧЕРТКОВ хулине, ГУСЯТИН хулине тата Днестр шывӗ ҫинчи ЗАЛЕЩИКИ хулипе чугун ҫул узелне туртса илнӗ тата халӑх пурӑнакан ытти 400 пункта ытла ирӗке кӑларнӑ.

Тӑшман фронтне татнӑ чухнехи тата ЧЕРТКОВ, ГУСЯТИН, ЗАЛЕЩИКИ хулисене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ЧЕРНЯХОВСКИЙ генерал-полковникӑн, ГРЕЧКО генерал-полковникӑн, ЖУРАВЛЕВ генерал-лейтенантӑн, МОСКАЛЕНКО генерал-полковникӑн, ЛЮДНИКОВ генерал-лейтенантӑн, ЧУВАКОВ генерал-майорӑн, ЗАМЕРЦЕВ генерал-майорӑн, ЛАЗЬКО генерал-майорӑн, ШМЫГО генерал-майорӑн ҫарӗсем, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн КАТУКОВӐН, РЫБАЛКО генерал-полковникӑн, ЛЕЛЮШЕНКО генерал-лейтенантӑн, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ГЕТМАНӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ДРЕМОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ПАНФИЛОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн ИВАНОВӐН, танковӑй ҫарсен генерал-майорӗн МАЛЫГИНӐН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ПОЛУБОЯРОВӐН танкисчӗсем, артиллери генерал-полковникӗн ВАРЕНЦОВӐН, артиллери генерал-майорӗн БРИЧЕНОКӐН, артиллери генерал-майорӗн ЛИХАЧЕВӐН, артиллери генерал-майорӗн ВОЛЧЕКӐН, артиллери генерал-майорӗн САНЬКОН, РАЗУМОВСКИЙ полковникӑн артиллерисчӗсем тата авиаци генерал-полковникӗн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-майорӗн ПОЛУНОВӐН, авиаци генерал-майорӗн ГОЛОВНЯН, авиаци генерал-майорӗн КАМАНИНӐН, КОТЕЛЬНИКОВ полковникӑн, ЮЗЕЕВ полковникӑн, ТИТАРЕНКО капитанӑн летчикӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве палӑртса хӑварас майпа тӑшман фронтне татнӑ чухнехи тата ЧЕРТКОВ, ГУСЯТИН, ЗАЛЕЩИКИ хулисене ирӗке кӑларассишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене «ЧЕРТКОВСКИ», «ГУСЯТИНСКИ», «ЗАЛЕЩИЦКИ» ятсем пама тата орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, мартӑн 24-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 1-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, нимӗҫсен ТАРНОПОЛЬПЕ ПРОСКУРОВ участокӗнчи оборонине татнӑскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн Эсир ертсе пыракан мӗнпур ҫарсене, нимӗҫсен оборонине татнӑ ҫӗрте пулнӑскерсене, ТАВ ТӐВАТӐП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.
1944 ҫулхи мартӑн 24-мӗшӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 23-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 23-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем КРЕМЕНЕЦ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнелле тӑшманпа ҫапӑҫса ҫаплах малалла талӑнса пынӑ, Тарнополь облаҫӗнчи ЗАЛОЖЦЫ, ГЛУБОЧЕК ВЕЛИКИЙ район центрӗсене тытса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 20 пункта ытла йышӑннӑ.

УКРАИНӐРИ 1-мӗш фронт ҫарӗсем ҫак кунсенче ТАРНОПОЛЬПЕ ПРОСКУРОВ участокӗнче ҫӗнӗрен наступлени пуҫласа янӑ, тӑшман оборонине татнӑ, виҫӗ кун хушши ҫапӑҫса, 40 километртан пуҫласа 60 километр таран малалла куҫнӑ. Ҫав наступленире пирӗн ҫарсем Тарнополь облаҫӗнчи район центрӗсене: КОПЫЧИНЦЫ хулипе пысӑк чугун ҫул узелне, ТРЕМБОВЛЯ хулипе пысӑк чугун ҫул станцине, МИКУЛИНЦЫПА ГРИМАЙЛОВ ялӗсене тата Каменец-Подольск облаҫӗнчи ФЕЛЬШТИН район центрне туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 200 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — БЕРЕЗОВИЦА-ВЕЛЬКА, МЫШКОВИЦА, НАСТАСУВ, СУЩИН, ИЛАВЧЕ, ГЛЕЩАВА, ИВАНОВКА, МШАНЕЦ, ЯБЛОНОВ, ХОРОСТКОВ, ОСТАПЕ, ТУРУВКА, РЫПНА, СОЛОМНО, НЕМИРИНЦЫ, АЛЕКСАНДРОВКА, ВАРОВЦЫ, БОРЩЕВКА, КУЗЬМИН, АЛЕКСИНЕЦ-ПОДЛЕСНЫЙ, АЛЕКСИНЕЦ-ПОЛЬНЫЙ, КАДИЕВКА, АНДРЕЙКОВЦЫ ятлӑ пысӑк ялсем тата БЕРЕЗОВИАЦ-ОСТРОВ, ПРОШОВА, МИКУЛИНЦЫ-СТРУСОВ, ДЕРЕНЮВКА, ХОРОСТОВ, ГРИМАЙЛОВ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Пирӗн ҫарсем пыра-пыра ҫапнипе тӑшмана ҫынсемпе техника енчен пысӑк ҫухатусем кӳнӗ.

ВИННИЦА хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере тата унӑн контратакисене сире-сире ярса ҫаплах наступлени туса пынӑ, КАМЕНЕЦ-ПОДОЛЬСК облаҫӗнчи район центрне ЛЕТИЧЕВ хулине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 25 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — БУЦНИ, ГОЛЕНИЩЕВО, ДУБОВАЯ, КУРИЛОВЦЫ, ЛОПАТЕНЦЫ, РАЖЕПЫ, ГОЛОДКИ, МИГАЛЕВЦЫ, ЯЛТУШКОВ ятлӑ пысӑк ялсем.

МОГИЛЕВ-ПОДОЛЬСКИЙ хулинчен кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем, ДНЕСТР шывӗн сылтӑм енче наступление вӑйлатса пырса, Молдаван ССР-ӗн район центрӗсене: РЫШКАНОВКА хулине, ТЫРНОВАПА ВЕРТЮЖАНЫ ялӗсене туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата тӑшманпа ҫапӑҫса халӑх пурӑнакан ытти 40 пункта ытла йышӑннӑ.

ГАЙВОРОН хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ, Одесса облаҫӗнчи район центрне — КОДЫМА хулипе пысӑк чугун ҫул станцине туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти 30 пункта ытла йышӑннӑ. Вӑл шутра — БАШТАНКОВО, ИВАШКОВО, ВОЛОВА, ШЛЯХОВО, РАКУЛОВО, ЮЗЕФОВКА ялӗсем.

НИКОЛАЕВ хули енче пирӗн ҫарсем тӑшмана КӐНТӐР БУГ шывӗн сылтӑм хӗрринчен тасатас тӗлӗшпе ҫапӑҫнӑ, БОЛГАРКА, РАКОВО, НОВО-ГРИГОРЬЕВСК, АРНАУТОВКА, ПЕСКИ, ГУРЬЕВКА, КОНСТАНТИНОВО ялӗсене туртса илнӗ. Пирӗн ҫарсем ВОЗНЕСЕНСК хули патне таччӑнах ҫитсе тухнӑ та тӑшманпа хула тулашӗнче ҫапӑҫма тытӑннӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Мартӑн 22-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 51 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 24 самолетне персе ӳкернӗ.

Фронтри пек тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ

КУСЛАВККА. Комбинат коллективӗ февраль уйӑхӗнче пӗтӗм вӑйран тӑрӑшса ӗҫлесе. Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариачӗн иккӗмӗш премине илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Шукет, Хитин юлташсем начальник пулса ӗҫлекен цехсен коллективӗсем март уйӑхӗнчи задание срокчен 6 кун малтан пурнӑҫлама пулчӗҫ. Мачикин, Рудаков, Панков стахановецсем ӗҫ нормине тӑтӑшах 200—250 процент таран пурнӑҫласа пыраҫҫӗ.

Комбинат коллективӗ, март уйӑхӗнче ӗҫ тухӑҫлӑхне тата ытларах ӳстерсе, фронтпа ҫӗршыва планран иртгерсе продукци парассишӗн тӑрӑшса ӗҫлет.

Н. ПЕТРУЧЕНКО

Муркаш райсовечӗн сессийӗ

МУРКАШ, мартӑн 24-мӗшӗ. (Хамӑр корр.). Мартӑн 23-мӗшӗнче Муркаш райсовечӗн 1-мӗш черетлӗ сессийӗ пулса иртрӗ. Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗ хушнипе сессие Верховный Совет Президиумӗн секретарӗ А. Измайлов юлташ уҫать. Вӑл ҫӗнӗ район совечӗ умӗнче тӑракан задачӑсем ҫинчен кӗскен каласа парать.

Сесси Муркаш райсовет исполкомӗн председателӗ пулма Г. Федоров юлташа, унӑн заместителӗ пулма В. Яргеев юлташа суйларӗ. Ҫавӑн пекех сесси райзо заведующийӗ пулма И. Кожаков юлташа, районо заведующийӗ пулма М. Григорьев юлташа, райфо заведующийӗ пулма Ф. Абрамов юлташа суйларӗ.

Канадӑн пӗр-пӗрне пулӑшасси ҫинчен калакан 1943 ҫулта йышӑннӑ Законӗ тӑрӑх Канадӑран Совет Союзне ҫар хатӗрӗсем тӑратасси ҫинчен ССР Союзӗпе Канада хушшинче тунӑ килӗшӗве алӑ пусни

1944 ҫулхи февралӗн 11-мӗшӗнче, Оттавӑра (Канада), Канадӑн ҫар хатӗрӗсем тӑратасси (Пӗрлешнӗ Нацисем пӗр-пӗрне пулӑшасси) ҫинчен калакан 1943 ҫулта йышӑннӑ Законӗ тӑрӑх Канадӑран Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзне ҫар хатӗрӗсем тӑратмалли принципсем ҫинчен ССР Союзӗн Правительствипе Канада Правительстви хушшинче Килӗшӳ туса алӑ пуснӑ.

СССР Правительстви ячӗпе Килӗшӗве СССР Тулашри Суту-илӳ Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ В. А. Сергеевпа ССР Союзӗн Канадӑри Ӗҫӗсен Поверенннӑйӗ Г. И. Тункин, Канада Правительстви ячӗпе — Канадӑн Премьер-Министрӗ тата Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Министрӗ Маккензи Кинг господин тата Вооруженипе Снабжени Министрӗ К. Д. Хау господин алӑ пуснӑ.

Килӗшӗве икӗ ҫӗршыв пӗр-пӗрне паракан пулӑшу пӗр-пӗрне усӑ кӳмелле принципа тунӑ.

Килӗшӳре пӗр-пӗрипе калаҫса татӑлнӑ енсем пӗрлехи тӑшмана хирӗҫ пыракан кӗрешӳре пӗр-пӗрне пулӑшасси ҫинчен калакан хӑшпӗр положенисемпе принципсене те ҫырса хунӑ.

Килӗшӳ ӑна алӑ пуснӑ кунран пуҫласах ӗҫе кӗнӗ тата, Канадӑн Пӗрлешнӗ Нацисем пӗр-пӗрне пулӑшасси ҫинчен калакан 1943 ҫулта йышӑннӑ Законӗ тӑрӑх, Канада Совет Союзне ҫак Килӗшӗве тӑвиччен тӑратнӑ материалсем тӗлӗшпе те законлӑ пулса юлать.

Аялтарахра Килӗшӗвӗн текстне пичетлетпӗр.

Канадӑн ҫар хатӗрӗсем тӑратасси (Пӗрлешнӗ Нацисем пӗр-пӗрне пулӑшасси) ҫинчен калакан 1943 ҫулта йышӑннӑ Законӗ тӑрӑх Канадӑран Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзне ҫар хатӗрӗсем тӑратмалли принципсем ҫинчен Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Правительствипе Канада Правительстви хушшинче тунӑ

КИЛӖШӲ

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗпе Канада ҫак вӑрҫӑра пӗрлешнине шута илсе, тата

Ҫар хатӗрӗсене Пӗрлешнӗ Нацисем хушшинче вӑрҫӑн стратегиллӗ ыйтӑвӗсемпе килӗшӳллӗн валеҫме кирлине, ҫапла вара ҫӗнтерӳ тӑвас тата мир тӑвас ӗҫсене май килнӗ таран усӑллӑрах пулӑшмалла тӑвассине шута илсе, тата

Пӗрлешнӗ Нацисенчен пӗри тепӗр нацие ҫавӑн пек ҫар хатӗрӗсем парса тӑмалли условисем вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи суту-илӗве йывӑрлатма е суту-илӗве чакарма е тӗрӗс те нумай вӑхӑтлӑха тунӑ мире ытти мӗнле те пулин майпа сиен кӳме тивӗҫлӗ маррине шута илсе, тата

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗпе Канада Правительствисем Канадӑран Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзне ҫар хатӗрӗсем тӑратмалли условисем тӗлӗшпе Килӗшӳ тума иккӗшӗ те кӑмӑлланине шута илсе,

Аялтарахра алӑ пуснисем, тивӗҫлӗ правительствӑсенчен ҫак ӗҫе тума тивӗҫлӗ майсемпе полномочисем илнӗскерсем, аялтарахра кӑтартнӑ ӗҫсем пирки Килӗшӳ тунӑ:

1-МӖШ СТАТЬЯ

Канадӑн ҫар хатӗрӗсем тӑратасси (Пӗрлешнӗ Нацисем пӗр-пӗрне пулӑшасси) ҫинчен калакан 1943 ҫулта йышӑннӑ Законӗпе килӗштерсе, Канада правительстви Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительствине, Канада правительстви вӑхӑтран вӑхӑта ирӗк панӑ тӑрӑх, ҫар хатӗрӗсем парса тӑрать.

2-МӖШ СТАТЬЯ

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительстви Канадӑна хӳтӗлеме тата унӑн оборонине ҫирӗплетме пулӑшса пырать тата хӑй пама пултарнӑ япаласемпе пулӑшусене, ҫӑмӑллӑхсене е информацисене, килӗшӳ тӑрӑх тата вӑрҫӑ ӗҫсем аталанса пынӑ май, вӑхӑтран вӑхӑта парса тӑрать.

3-МӖШ СТАТЬЯ

1-мӗш статьяпа килӗштерсе, Канада правительстви Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительствине мӗнле ҫар хатӗрӗсем, мӗн чухлӗ тата мӗнле срокчсенче парассине икӗ правительство пӗр-пӗрипе калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх палӑртаҫҫӗ тата вӗсене протоколсенче е ытти килӗшӳсенче кӑтартса параҫҫӗ.

4-МӖШ СТАТЬЯ

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительстви вӑрҫа пӗрле тата ӑнаҫлӑн туса пырас ӗҫре ҫак килӗшӳ тӑрӑх панӑ кирек мӗнле ҫар хатӗрӗсемпе те усӑ курма килӗшет.

5-МӖШ СТАТЬЯ

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительстви ҫак килӗшӳ тӑрӑх хӑйне панӑ ҫар хатӗрӗсене, Канада правительстви килӗшӳ памасӑр, урӑх никӑмле правительствӑна та е ытти ҫӗршы всенчи нимӗнле ҫынсене те сутмасть.

6-МӖШ СТАТЬЯ

Канада правительстви ҫак килӗшӳ тӑрӑх панӑ мӗнле те пулин ҫар хатӗрӗсене, 7-мӗш статьяра уйрӑмӑн асӑрхаттарса хӑварнӑ хатӗрсемсӗр пусне тата 8-мӗш статьяра пӑхнӑ обстоятельствӑсене шута илсе, уйрӑм килӗшӳ туса каялла таварса пама тивӗҫлӗ ҫар хатӗрӗсемсӗр пусне, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительствинчен Канада правительстви каялла таварса пама ыйтмасть.

7-МӖШ СТАТЬЯ

Вӑрҫӑ пыракан кирек мӗнле тӗп вырӑнта та вӑрҫӑ ӗҫӗсем чарӑнсан, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительствине панӑ, анчах та ҫав вӑхӑт тӗлне Канадӑран илсе каяйман кирек мӗнле ҫар хатӗрӗсем те ҫӗнӗрен Канада харпӑрлӑхӗ пулса тӑраҫҫӗ, ку шута вӑрҫӑ ӗҫӗсем чарӑнман вырӑна ӑсатма уйӑрса хунӑ ҫар хатӗрӗсем е тата Канада правительстви палӑртнӑ тӑрӑх пулӑшу пама уйӑрса хунӑ е ытти ҫавӑн йышши материалсем кӗмеҫҫӗ.

8-МӖШ СТАТЬЯ

Канада правительстви ҫаксене ыйтма хӑйне право хӑварать:

а) кирек мӗнле вырӑнта та вӑрҫӑ ӗҫӗсем чарӑннӑ хыҫҫӑн, хуҫалӑха юсаса ура ҫине тӑратас тӗллевпе ҫак килӗшӳ тӑрӑх панӑ хӑйсем тӗллӗн куҫса ҫӳрекен хатӗрсене Пӗрлешнӗ Нацисенчен пӗрине е ытти мӗнле те пулин пӗтӗм тӗнчери организаци аллине пама;

б) Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительствине ҫак килӗшӳ тӑрӑх панӑ тип ҫӗрте ҫӳрекен транспорт хатӗрӗсене, самолетсене, хӗҫпӑшалсене е ҫар снаряженийӗсене, вӗсем Канадӑн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсене кирлӗ пулса тӑраҫҫӗ пулсан тата Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительствине вӑрҫӑ операцийӗсем валли кирлӗ мар пулса тӑраҫҫӗ пулсан, вӑрҫӑ ӗҫӗсем чарӑннӑ хыҫҫӑн Канадӑн хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен, Канада тулашӗнче тӑраканскерсен, аллине пама, тата

в) ҫак килӗшӳ тӑрӑх тӑратнӑ самолетсемпе хӑйсем тӗллӗн куҫса ҫӳрекен хатӗрсене, усӑ курма юрахлӑскерсене, вӗсем Канадӑна кирлӗ пулса тӑраҫҫӗ пулсан, вӑрҫӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн Канадӑна таварса пама, — ҫакӑнпа пӗрлех асӑннӑ япаласем мӗн чухлӗ пӗтнине шута илеҫҫӗ, Канада оборудованине пӗрлехи фонда кӗртнӗ пирки е урӑх сӑлтавсем пирки уйӑрса илме май ҫук пулсан, Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительстви ҫав оборудованипе ҫавӑн йышши урӑх оборудованипе улӑштарса пама пултарать.

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительстви, ҫакӑн йышши кирек мӗнле ыйтӑва та Канада правительствипе канашласа тунӑ ӑнаҫлӑ условисем тӑрӑх тивӗҫтерес тесе, хӑйӗнчен мӗн килнине пӗтӗмпех туса пама килӗшет.

9-МӖШ СТАТЬЯ

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗпе Канада правительствисем хӑйсен ҫӗршывӗсем хушшинчи тата пӗтӗм тӗнчери пӗр-пӗрне усӑллӑ экономикӑллӑ ҫыхӑнусене аталантарса пыма кӑмӑл тунине татах та тепӗр хут ҫирӗплетсе параҫҫӗ. Вӗсем: 1941 ҫулхи августӑн 14-мӗшӗнче йышӑннӑ Декларацире, «Атлантика хартийӗ» текен ятпа паллӑ пулса тӑраканскерте, кӑтартса панӑ мӗнпур экономикӑллӑ тӗллевсене пурнӑҫа кӗртме пулӑшас тесе, халӑха ӗҫ тупса памалли, таварсем туса кӑларассипе вӗсене илессипе сармалли тата суту-илӳ политики тӗлӗшпе тунӑ пӗтӗм тӗнчери килӗшӳсем тӑрӑх суту-илӗве аталантарма пулӑшмалли мерӑсене йышӑнассине хӑйсен ертсе пыракан тӗллевӗ пулса тӑрать, тесе пӗлтереҫҫӗ.

10-МӖШ СТАТЬЯ

Ҫак килӗшӳ паянхи кунтан пуҫласа законлӑ пулать, унпала Канадӑн ҫар хатӗрӗсем тӑратасси (Пӗрлешнӗ Нацисем пӗр-пӗрне пулӑшасси) ҫинчен калакан 1943 ҫулта йышӑннӑ Законӗ тӑрӑх Канада правительстви Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн правительствине ҫар хатӗрӗсем тӑратас ӗҫре усӑ курмалла пулать, ку шута ҫак килӗшӗве тӑвиччен 1943 ҫулхи закон тӑрӑх ҫар хатӗрӗсем пани те кӗрет. Килӗшӳ икӗ правительство пӗр-пӗрипе калаҫса татӑлса килӗшӳ тӑвиччен законлӑ пулса тӑрать.

ОТТАВА, 1944 ҫулхи февралӗн 11-мӗшӗ.

Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзӗн Правительствишӗн тата унӑн ячӗпе алӑ пуснӑ
В. СЕРГЕЕВ
Г. ТУНКИН

Канада правительствишӗн тата унӑн ячӗпе алӑ пуснӑ
МАККЕНЗИ КИНГ
К. Г. ХАУ.

СПРАВКА

Канадӑн ҫар хатӗрӗсем тӑратасси ҫинчен калакан законне, килӗшӳре асӑнаканскерне, Канада парламенчӗ 1943 ҫулхи майӑн 14-мӗшӗнче йышӑннӑ.

Ҫак закон тӑрӑх Канада енчен Пӗрлешнӗ Нацисене ҫар материалӗсем парса тӑрассине пӑхнӑ. Ҫав закона пурнӑҫа кӗртекен орган вырӑнне Канадӑра Пӗр-пӗрне пулӑшас тӗлӗшпе ӗҫлекен Комитет тунӑ. Унӑн составӗнче пилӗк министр тӑрать, ӑна Вооруженипе Снабжени министрӗ председатель пулса ертсе пырать.

Комитетӑн тӗп задачи — вӑрҫӑн стратегиллӗ ыйтӑвӗсем тӑрӑх Пӗрлешнӗ Нацисене кирек хӑшне те ҫар хатӗрӗсем парса тӑрасси, вӗсене пӗр-пӗрипе улӑштарса тӑрасси пулса тӑрать, ҫав ҫар хатӗрӗсемпе вӗсене илекен нацисем вӑрҫӑ пӗрле тата ӑнаҫлӑн туса пынӑ ҫӗрте усӑ курма тивӗҫлӗ.

Килӗшӳре асӑнакан ҫар материалӗсемпе хатӗрсем тесе ҫав закон тӑрӑх — мӗнпур тӗрлӗ орудисене, боеприпассене, самолетсене, суднӑсене, станоксемпе оборудованисене, материалсене, ялхуҫалӑхӗн кирек мӗнле симӗҫӗсене те тата ытти тӗрлӗ таварсемпе япаласене калаҫҫӗ.

Май уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнчӗҫ

СӖНТӖРВӐРРИ. (Телефонпа). Судоверфь коллективӗ Сталин юлташӑн Хӗрлӗ Ҫар 26 ҫул тултарнӑ ятпа панӑ приказне сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн ӗҫ тухӑҫлӑхне татах ӳстерме обязательство илнӗччӗ. Работницӑсем хӑйсен обязательствисене пурнӑҫлассишӗн пӗтӗм вӑйран тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Тимӗрҫӗ цехӗ февраль уйӑхӗнчи задание 103 процент пурнӑҫларӗ. Н. Прокопьев, И. Яковлев стахановецсем задание куллене икӗ хут ирттерсе тултараҫҫӗ. Станочница А. Лебедева юлташ юлашки кунсенче ӗҫ тухӑҫлӑхне нумай ӳстерчӗ. Вӑл кашни кунах ӗҫ нормине 150—170 процент тултарать.

Сталин ячӗпе тӑракан артиллери заводӗн коллективӗ Совет Союзӗнчи мӗнпур заводсемпе фабрикӑсен коллективӗсенчӗнсе калаҫнине хапӑл туса йышӑнса, судоверфь коллективӗ Сӗнтӗрвӑрри МТС-ӗ валли тракторсемпе ялхуҫалӑх машинисен запаслӑ пайӗсем туса парӗ.

Халӗ кунти рабочисемпе работницӑсем май уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнчӗҫ, ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстерсе пырассишӗн пӗтӗм вӑйран тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене тимлӗн пурнӑҫлассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

П. ЖИЛОЧКИН.

Тракторсем Белоруссие ҫитнӗ

Пенза, Иваново, Тамбов тата ытти облаҫсенчи ӗҫҫыннисем Белоруссири МТС-сене, тӑванла пулӑшас шутпа, тракторсем тата тракторсенчен кӑкармалли инвентарь яраҫҫӗ. Белоруссин ирӗке кӑларнӑ районӗсене хӗвелтухӑҫӗнчи облаҫсенчен мӗн пурӗ 1000 трактор ытла пынӑ ӗнтӗ. Белоруссири МТС-сенче тракторсемпе механиксем тата бригадирсем 800 ҫынна яхӑн пынӑ. Вӗсем белорус колхозникӗсене нимӗҫ оккупанчӗсем юхӑнтарнӑ ялхуҫалӑхне ура ҫине тӑратма пулӑшаҫҫӗ. (ТАСС)

Виҫҫӗмӗш пятилетка заемӗн 13-мӗш вылявӗ

Мускаври Союзсен Сурчӗн Октябрь залӗнче мартӑн 19-мӗшӗнче виҫҫӗмӗш пятилетка заемӗн (виҫҫӗмӗш ҫулхи кӑларӑмӗн) 13-мӗш вылявӗ пулса иртнӗ. Вылявра 846.400 выигрыш, пӗтӗмпе 134.743.200 тенкӗлӗх пулнӑ.

3.000 тенкӗлӗх выигрыш 98.156-мӗш серири 31-мӗш № облигаци ҫине тухнӑ. Вӑл вара ҫав заемӑн пур 92 разрядӗнчи ҫав номерпе ҫав серири облигацисем ҫине те тухнӑ пулать. (ТАСС).

Чăваш АССР-ĕн 1-мĕш созыври Верховный Совечĕн VII-мĕш Сессийĕ

Чăваш АССР-ĕн 1944 çулхи бюджечĕ çинчен тунă доклад тăрăх тухса каланисем

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет исполкомĕн председателĕ П. И. Аникин юлташ каланă сăмах

Депутат юлташсем! Фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан Аслă отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче совет халăхĕ хăйĕн правительстви тавра, Ленин—Сталин партийĕ тавра нихăçанхинчен те таччăнрах пĕтĕçрĕ, вăл хăйĕн пĕтĕм вăйне таса ĕçе — тăшмана хăвăртрах çĕмĕрсе тăкас ĕçе парать.

Пур тĕлĕшпе те паттăр фронтовиксене тивĕçлĕ пулассишĕн кĕрешесси, наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çарпа пĕр харăс утассишĕн кĕрешесси Чăваш республикинчи ĕçсыннисен кулленхи законĕ пулса тăчĕ. Çавăн çинчен каласçĕ ĕнтĕ вĕсен колхоз хирĕсенчи, заводсемпе фабрикăсенчи, лабораторисенчи тата учрежденисенчи патриотла чаплă ĕçĕсем.

Пирĕн çĕршыв, вăрçă ĕçĕсене туса пыма укçа-тенкĕ нумай расходланине пăхмасăрах, халăх хуçалăхне тата ĕçсынни сен социаллă-культурăллă ĕçĕсене укçатенкĕ хывассине çулран-çулах ӳстерсе пырать.

Шупашкар хулин бюджечĕ 1940 çулта 6.022.200 тенкĕ пулнă пулсан, 1944 çулта вăл 11.730.300 тенкĕ çити ӳснĕ.

Хула бюджетне çултан çулах ытлашшипех пурнăçласа пынă. Иртнĕ çулта бюджета 107,7 процент чухлĕ пурнăçа кĕртнĕ. Пур предприятисем те производство планĕсене ăнăçлăн тултарнă пулсан, шалти резервсене мобилизацилесе, накопленисене ӳстерсе пынă пулсан, хула бюджечĕн доход пайне уйрăм статьясем тăрăх тата та ытларах ирттерсе пурнăçа кĕртме пулатчĕ. Анчах та пирĕн производство планĕсене тултарассишĕн çителĕксĕр кĕрешекен предприятисем те пур-ха. Çапла, сăмахран, хулари электростанци иртнĕ 1943 çулхи плана 67,6 процент çеç тултарчĕ. Çавна пула вăл хулана 3.276 пин киловат-сехет электроэнерги парса çитереймерĕ. Электроэнерги пулман пирки тир-сăран комбиначĕ 1.154 пин тенкĕлĕх, чăлха фабрики 3.610 пин тенкĕлĕх, пир-авăр фабрики 10.125 пин тенкĕлĕх продукци параймарĕç. Çакна пула государство бюджетне 8.686 пин тенкĕ укçа кĕреймерĕ.

Хулари вырăнти промышленность иртнĕ çулта чылай лайăхрах ĕçлерĕ. Вăл продукци туса кăлармалли плана 132 процент тултарчĕ. Промысла артелĕсем те производство планне иртерсе тултарчĕç. Уйрăмăнах кунта Мăн Шахчура ялĕнчи артель лайăх ĕçленине палăртмалла. Вăл çулталăкри плана 145,8 процент тултарчĕ. Кăçал та вăл ĕç хăвăртлăхне ӳстерсех пырать. Анчах та пирĕн заданисене пурнăçа кĕртмен артельсем те сахал мар-ха. Сăмахран, «Металлист» артелĕн тимĕрçĕ цехĕ çулталăк хушшинче мĕн пурĕ те пĕр плита, 2 задвижка, 1 лӳшке, 2 турчăка тата 2 пуртă çеç туса кăларнă.

Калас пулать, пирĕн предприятисемпе артельсем продукцин

хăйне ларакан хакне йӳнетесси çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Малта пыракан предприятисем те çав шутах кĕресçĕ. Акă, сăмахран, «Вышивка» артеле илер. Вăл хăйĕн планне начар мар пурнăçа кĕртсе пырать. Анчах та çав артель туса кăларакан продукцин хăйне ларакан хакĕ 1943 çулта 1942 çулхи шайран 5,9 процент ӳснĕ. «Кооператор» артель продукцин хăйне ларакан хакне 32,8 процент ӳстернĕ. «Кожупряжь» артель туса кăларакан пĕр тонна урапа маçĕ 1942 çулта 40 тенкĕ тăнă пулсан, 1943 çулта вăл 80 тенке çити ӳснĕ. «Красный мебельщик» артельте продукцин хăйне ларакан хакĕ çулталăк хушшинче кăна 4 хут ытла ӳснĕ. Çаксем пурте хула бюджечĕн доход пайне укçа-тенкĕ парса тăрас хисепе чакараççĕ. Продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетессишĕн предприятисемпе артельсен руководителĕсен куллен тимлĕн ĕçлемелле.

Бюджет тăрăх халăха çутта кăларас тата халăх сывлăхне сыхлас ĕçе çулсеренех укçа-тенкĕ чылай хывма палăртса пынă. Çапла, Шупашкар хулинче социаллă-культурăллă мероприятисене пурнăçа кĕртме каякан расходсем 1943 çулта 1941 çулхи хисепрен 4.575,6 пин тенкĕ ытларах пулнă. 1944 çулта социаллă-культурăллă мероприятисене пурнăçа кĕртме 8.955 пин тенкĕ расходлама пăхса хунă. 1943 çулта халăха çутта кăларас енĕпе расходлама пăхнă укçа-тенкĕрен 98,1 проценчĕпе усă курнă. Уйрăмăнах шкулта кирлĕ инвентарьсене тата çар кабинечĕсен оборудованине туянма тата юсама панă укçа-тенкĕпе начар усă курнă. Тăлăха юлнă ачасене вырнаçтарма панă укçа-тенкĕрен 50 проценчĕпе çеç усă курнă.

1944 çулта Шупашкар хулине халăха çутта кăларас ĕçсене тума 3.728,8 пин тенкĕ пама палăртнă. Пурне те хут вĕрентмелли закона пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртермелле. 1944-мĕш вĕренӳ çулĕнче çав закон тăрăх 7 çула çитнĕ ачасене те вĕрентмелле пулать. Çитес вĕренӳ çулĕнче хулари шкулсенче 6,5 пин ача пулмалла. Çавăнпа та çĕнĕрен уçăлакан шкул çурчĕсене юсама, вĕсем валли инвентарьсем тата вĕренӳре кирлĕ хатĕрсем туянма укçа-тенкĕ хушса памалла пулать. Пирĕн хулари шкулсем занятисене лайăх иртерччĕр, вĕренекенсене çирĕп пĕлӳ паччăр тесе тăрăшмалла.

Иртнĕ çулта хулара сывлăха сыхлас тĕлĕшпе ĕçлекен учрежденисен шутне ӳстерес енĕпе чылай ĕçсем туса иртернĕ. Çак ĕçе тума 1943 çулхи бюджетран уйăрса панă 5.276,6 пин тенкĕ укçапа пĕтĕмпех усă курнă. Анчах, калас пулать, халăха медицина тĕлĕшĕнчен пулăшас енĕпе пĕтĕм майсемпе те усă курман-ха. Хулари медицина работникĕсем Шупашкар больницисенче лайăх йĕркелĕхпе тасалăх тума тивĕçлĕ.

Иртнĕ çулта хулари пурăнмалли çуртйĕрпе коммунальнăй хуçалăха 1.905 пин тенкĕ укçа хывнă. Çак енĕпе 1942 çулта пĕтĕмпе те 706 пин тенкĕ çеç расходланă. Асăннă укçа-тенкĕпе усă курса, куçса килнĕ çемьесем тата хулари предприятисенчи рабочисем валли икĕ хутлă 2 çурт тунă, 24 çурта тĕпрен юсанă тата 234 хваттерте вак-тĕвексене юсанă, хулари водопровода аслăлатнă, хулари мунчана тата электростанцие юсанă.

Хулана лайăхлатас енĕпе кăçал тата та пысăкрах ĕçсем тумалла.

Депутат юлташсем! Шупашкар хулине Отечественнăй вăрçă инваличĕсем нумай килеççĕ. Вĕсен килĕсем тăшман йышăннă территори çинче-ха. Вĕсем пиртен пулăшу ыйтаççĕ. Иртнĕ çулта хулана килекен вăрçă инваличĕсене пулăшма хула совет исполкомне 40 пин тенкĕ уйăрса паначчĕ. Эпир пурĕ 49 пин тенкĕ расходларăмăр. Çав енĕпе кăçалхи икĕ уйăх хушшинче кăна 7 пин тенкĕ расходларăмăр.

Эпĕ Верховный Совет Сессийĕнчен пире вăрçă инваличĕсене пулăшу пама 50 пин тенкĕ хушса пама ыйтатăп. Кунсăр пуçне, çар çыннисен хулара пурăнакан çемьисене пулăшма 60 пин тенкĕ хушса пама ыйтатăп.

Çавăн пекех эпĕ ачасем çуратмалли çуртра медицина ĕçне лайăхлатма 21 пин тенкĕ тата 26 хваттерлĕ çурта юсама 100 пин тенкĕ хушса пама ыйтатăп.

Депутат юлташсем! 1944 çулта пирĕн умра вăрçăла хуçалăх тĕлĕшĕнчен ответлă задачăсем тăраççĕ. Вăл задачăсене пурнăçа кĕртмешкĕн пирĕн хамăр вăя шеллемесĕр ĕçлемелле. Орденлă Чăваш республикинчи ĕçсыннисем хăйсен хастарлă ĕçĕпе республикăн хуçалăхне малалла аталантарса пыма тата 1944 çулхи бюджета ăнăçлăн пурнăçа кĕртме майсем туса парĕç. Çапла вара тăшмана тĕпĕ-йĕрĕпех çĕмĕрсе тăкма нумай пулăшĕç. (Алă çупаççĕ).

Çуракине хатĕрленсе çитмелли фронтовой уйăхлăх

„ЭПĔ ВĂХĂТЛĂХ ÇЫН"

СОВЕТСКОЕ. Доронин ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче фронта кайсан, ун вырăнне А. Никифоров колхозника председателе суйланă.

— Мана ун чухне вăхăтлăха суйларĕç. Эпĕ колхоз председателĕнче вăхăтлăха çеç,—тет Никифоров хăй пирки.

Председателĕн çак вăхăтлăх шухăшкăмăлĕ колхозăн пĕтĕм ĕçĕнче палăрать. Колхоз çуракине хатĕрленсе çитмелли уйăхлăха хутшăнман, ĕçсем кунта хăйсем тĕллĕн пулса пыраççĕ. Вăрлăхсене ячĕшĕн çеç сортланçи тунă. Триера ытти çĕртен илсе килме килĕштермен те, вăрлăха ахаль аласемпе çеç тасаткаланă. Çавăнпа вăрлăхсем тасалăх енĕпе кондицие лармаççĕ. Сĕлĕ 73 процент кăна шăтать. Ăна тепĕр хут сортлама хушнă, анчах ĕç «триер çуккипе» чарăнса тăрать. Триерĕ сывăхри колхозсенчех пур, анчах кайса илмеççĕ.

Колхозăн клевер вăрлăхĕ икĕ центнер, вир 60 килограмм çитмест. Вăрлăхлăх клевер колхозăн хăйĕнчех пур, ăна шĕкĕлчесе тасатмалла. Шĕкĕлчеме те панă, анчах ку таранччен 7—8 килограмм çеç шĕкĕлчесе хунă. Вирне тахçанах туянмалла пулнă. Вăл юнашарти Одарка колхозĕнчех пур. Кунти руководительсем пек каласан, «унта çитме ĕлкĕреймен».

Плугсене юсавлă тесе шутлаççĕ, анчах тимрисене туптаттарман, сӳресем вара ĕçе хатĕр мар: шăлĕсене çакман. Урапасемпе кӳлмелли хатĕрсем çитмеççĕ.

Колхоз агротехника ĕçĕсен хĕллехи планне пурнăçламан. Плана тултарас пулсан, татах 100 лав тислĕк кăлармалла.

Уйхир ĕçĕнче ĕçлеме звеносем тăвас тата социализмлă ăмăртăва сарас тĕлĕшпе вара Никифоров пачах нимĕн те тумасть. Кун çинчен хаçанчен сăмах та хушман.

Çураки хĕл кунĕсене çывăрса иртерекен председательсене—Никифоров пек «вăхăтлăх председательсене» кĕтмест.

Т. ИВАНОВ, (Хамăр корр.).

КОЛХОЗСЕН вăрлăх фондне

ÇАК КОЛХОЗНИКСЕМ — ТĂВАН ÇĔРШЫВĂН ÇУЛАМЛА ПАТРИОЧĔСЕМ — ХĂЙСЕН ЗАПАСĔСЕНЧЕН ХЫВНĂ:

Л. МЯСНИКОВ—Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри колхозница—10 пăт тырă.

А. ОВЧИННИКОВ—Елчĕк районĕнчи Аслă Пăла Тимĕш ялсоветĕн председателĕ—10 пăт тырă.

А. ОСИПОВА—çав районри Ворошилов ячĕпе тăракан колхозри колхозница—10 пăт тырă.

П. СКРЫПИН—çав колхозри колхозник—10 пăт тырă.

Н. БУРЯКОВ—çав колхозри колхозник—10 пăт тырă.

П. СКРЫПИН—çав колхозри колхозник, Отечественнăй вăрçă инваличĕ—12 пăт тырă.

А. ГАЯЗОВ—Елчĕк районĕнчи «Марс» колхозăн председателĕ—18 пăт тырă.

Ф. САЛАХЕЕВ—«Марс» колхоз председателĕн заместителĕ—12 пăт тырă.

САБИРЗЯНОВ—çав колхозри колхозник—6 пăт тырă.

ГИМАЛЬДИНОВ—çав колхозри колхозник—6 пăт тырă.

Ф. ХАСАНОВА—çав колхозри колхозница—12 пăт тырă.

С. БИКМЕЕВ—çав колхозăн бригадирĕ—10 пăт тырă.

САБИРОВА—çав колхозри колхозница—6 пăт тырă.

Вăрлăх—çуракин ылттăн фончĕ

Комсомольски районри «Трактор», «Мотор», «Интернационал», «Двигатель революции», «Красный Октябрь», Красин ячĕпе тăракан тата ытти колхозсем çуракине лайăх хатĕрленсе, вăйлă тырпул никĕсне хывса хăварассишĕн çине тăрса ĕçлеççĕ. Вĕсем вăрлăх фончĕсене хывса çитернипе пĕрлех, сортласа та пĕтерчĕç.

Кипечри «Трактор» колхоз членĕсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ. Вĕсем акмалли вăрлăхсене çителĕклĕ таран сортласа, шăтаслăхне тĕрĕсленĕ. Колхозниксем пуçарнипе Кӳршĕри «Победа» колхоза хăйсен ытлашши тыррине 60 центнер кивçен панă.

Анчах та чылай колхозсем малта пыракан «Трактор» колхозăн ĕçри опычĕпе усă курмаççĕ. Паянхи кун тĕлне районри 23 колхозра вăрлăх çитмест. Уйрăмăнах «Большевик», «Восход», «Победа», «Игенче», «Заветы Ильича», Буденный ячĕпе тăракан колхозсен вăрлăх çителĕксĕр.

Апла пулин те çак асăннă колхозсен председателĕсем вырăнтах вăрлăх тупса хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. «Дубрава», «Сормово», «Кзыл Сабанча» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсенче клевер вăрлăхĕ хатĕрлессипе нимĕн те туман. «Новая жизнь», «Ленинская победа», «Правда», «15 лет Чувашии» колхозсем кантăр вăррисем хатĕрлесе çитермен. Пĕр вăрлăхпа тепĕр вăрлăх улăштарасси çинчен шутласа пăхман.

Районра вăрлăхсене сортласа кондицие лартасси те çителĕксĕр пулса пырать. Халĕхе райçĕрĕç пайĕн даннăйĕсем тăрăх 8945 центнер вăрлăх кондицие ларман. Пуринчен ытларах вăрлăхсем тасамар пирки кондицие лармаççĕ.

С. ШАДИН.

Ют çĕршывсенче

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ФРАНКФУРТА ТАТА ФРАНКФУРТ РАЙОННЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Америка бомбардировщикĕсен чылаях йышлă соединенийĕ Франкфурт районĕнчи çар объекчĕсене атакăланă. «Чылаях йышлă соединени» тесе вĕсем операцире 250 бомбардировщикран пуçласа 500 бомбардировщика çити пулнă чухне калаççĕ.

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен пин самолечĕ ытла Германие вĕçсе кайса, чылай çар объекчĕсем çине бомбăсем нумай пăрахнă. Вăйлă пушарсем тухнă. Пуринчен те ытларах Франкфурт хулине атакăланă.

«Москито» йышши самолетсем Берлина тата Хĕвеланăç Германири районсене атакăланă.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем Берлинри çар тата промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: мартăн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши самолетсем Хĕвеланăç Германири объектсене атакăланă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ВĂРÇĂ ПУÇЛАННĂРАНПА ТУСА ИРТТЕРНĔ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи бомбардировщикĕсем Германи, Итали тата оккупациленĕ çĕршывсем çине 1940 çулхи майăн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1943 çулхи декабрĕн 31-мĕшне çитиччен 246.425 тонна бомба пăрахнă. Ку шутран 203.300 тонна бомба Германи çине пăрахнă, 9.060 тонна Итали çине тата 34.065 тонна оккупациленĕ çĕршывсем çине пăрахнă.

1940 çулта 12.795 тонна бомба пăрахнă, 1941 çулта—31.185 тонна, 1942 çулта—45.285 тонна, 1943 çулта—157.160 тонна бомба пăрахнă.

ФРАНЦУЗ ÇАРĔСЕМ КОРСИКĂПА ИТАЛИ ХУШШИНЧИ УТРАВ ÇИНЕ АННĂ

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Мароккори радио пĕлтернине панă. Унта çапла каланă: мартăн 19-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле француз çарĕсен отрячĕ Корсикăпа Итали хушшинчи утравсенчен пĕрне йышăннă. 36 салтака тыткăна илнĕ.

Корсикăпа Итали хушшинче çак утравсем выртаççĕ: Эльба, Монтекристо, Джильо, Капрая тата Пьяноса.

НИМĔÇСЕН 6 ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИНЕ ПУТАРНĂ

ЛОНДОН, мартăн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Англин тинĕс министерстви çапла пĕлтерет. Англин тинĕс-çар вăйĕсем Атлантика океанĕн çурçĕр пайĕнче союзниксен караванне атакăлама хăтланнă нимĕçсен подводнăй лодкисемпе ăнăçлă çапăçнă. Тăшманăн 6 лодкине путарнă. Союзниксен караванĕнчен пĕр карапĕ те пĕтмен.

АНГЛИН ИНÇЕНЕ ПЕРЕКЕН АРТИЛЛЕРИЙĔ ПЕНИ

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин кăнтăр çыранĕнчи инçене перекен артиллери туппиcем виççĕмĕш çĕр ĕнтĕ умлăн-хыçлăн персе тăраççĕ. Мартăн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле вĕсем нимĕçсен Па-де-Кале проливĕнчи судновсем çине пĕр сехете яхăн персе тăнă. Пĕтĕмпе 100 хута яхăн харăс персе янă.

ВЕЗУВИЙ СИРПĔНМЕ ПУÇЛАНĂ

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Темиçе кун çитет ĕнтĕ, Везувий сирпĕнме пуçланă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 22-мĕшĕнче каç пулса килнĕ вăхăтра Везувий кратерĕнчен лавă сирпĕнсе тухса тăвăн çурçĕр енчи аякки тăрăх юхса анма пуçланă. Çав лавă Сан-Себастьяно тата Массо ди Соммаре ялĕсене хăй айне тăвассипе хăратать. Çавăнпа та ку ялсенчи халăха 5 пин çынна çурçĕрчен урăх вырăна куçарнă. Унсăр пуçне Везувий çурçĕр енчи аяккинче ларакан ытти ялсенчи çынсем те пурлăхĕсене, килĕсене пăрахса, урăх çĕре тухса кайнă. Курнă çынсем каланă тăрăх, лава мартăн 20-мĕшĕнче каçхине кашни сехетре 200 метр чухлĕ шуса пынă, урăхла каласан, пĕр талăкра 5 километра яхăн шунă.

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Везувий çийĕнче таçта çитиччен тем хулăмĕш хуп-хура тĕтĕм явăнса тăрать. Чирково районĕнчи халăха урăх çĕре куçарнă. Лава юхса çитнипе Сан-Себастьяно ялĕн çурçĕр-хĕвеланăç пайĕ лава айне пулнă.

РУЗВЕЛЬТ ЧИРЛЕНИ

ЛОНДОН, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агенствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Шурă Çурт секретарĕ Эрли паян çапла каланă: Шăнса пăсăлнă пирки Рузвельт хăйĕн резиденцийĕнчен тухмасть. Президентăн температура хăпарман, çапах та врач ăна хăй кабинетĕнчен тухма сĕнмен.

„Хумхантаракан, савăнтаракан событи"

АМЕРИКА ХАÇАЧĔСЕМ ХĔРЛĔ ÇАРĂН НАСТУПЛЕНИЙĔ ÇИНЧЕН ÇЫРНИ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркри радио çапла пĕлтерет: Америка хаçачĕсен умстатьисенче Хĕрлĕ Çарăн çĕнĕ чаплă çитĕнĕвĕсем тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Çак тĕлĕшпе «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн умстатьи уйрăмах паллă пулса тăрать. Хĕрлĕ Çар Днестр шывĕ урлă каçни çинчен хаçат çапла çырать: çакă вăл хумхантаракан тата савăнтаракан событи. Сталинград патĕнче нимĕçсем хум тăррине хăпарса çитрĕç, унтан вара аялтан аялалла ӳкме пуçларĕç. Нимĕçсен хальхи калама çук пысăк пораженийĕ те вăрçăра ĕçсем урăхла май çавăрăнса кайнине кăтартать, вăл Гитлерăн авантюри çывăх вăхăтрах пĕтсе ларассине пĕлтерет.

„Хĕрлĕ Çар хăй тăшмантан малта тăнине пĕтĕм çулталăкĕпех кăтартса пычĕ"

АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ СОВЕТ ÇАРĔСЕН ÇĔНТЕРӲЛЛĔ НАСТУПЛЕНИЙĔ ÇИНЧЕН ÇЫРНИ

ЛОНДОН, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио совет çарĕсен Украинăри наступленийĕ мĕнле пыни çинчен тата унăн результачĕ мĕнле пулма пултарасси çинчен Англи хаçачĕсем мĕн çырнине иле-иле кăтартнă.

«Дейли геральд» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Украинăра халь пыракан çапăçу историе «Виçĕ юхан шывшăн—Днепршăн, Бугшăн тата Днестршăн çапăçни» тенĕ ятпа кĕрсе юлĕ. Гитлер хăйĕн çарĕсене Днестрпа Буг патĕнче кирек мĕн пулсан та тытăнса тăма хушнă. Анчах та унăн генералĕ Манштейн вăл хушнине пурнăçа кĕртме пултараймасть. Хальхи условисенче вăл мар ĕнтĕ хуçа. Стратеги енчен пăхсан та, тактика енчен пăхсан та, Гитлерăн приказне пурнăçа кĕртме май çук. Совет çарĕсем ытла та вирлĕн, пĕр чарăнмасăр малалла куçса пыраççĕ. Çавна пула Германин 6-мĕш армине пĕтерсе тăкнă ĕнтĕ. Совет çарĕсем Днестр шывĕ урлă каçрĕç. Буг шывĕ хыçала юлчĕ ĕнтĕ. Çанталăк калама çук начар тăрать пулин те, Хĕрлĕ Çар хăвăрттăн малалла куçса пырать. Совет генералĕсем çав тери мастер пулнине пула тата совет çарĕсен çапăçура пысăк паттăрлăхне пула çеç çавăн пек ăнăçлăн малалла куçса пыма пулнă. Хĕрлĕ Çар хăй тăшмантан малта тăнине пĕтĕм çулталăк тăршшĕпех кăтартса пычĕ.

«Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçатăн çарти корреспонденчĕ çапла çырать. Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче юлашки уйăхсенче пулнă çапăçурăн истори нумай вĕрентсе юлĕ. Темиçе çапăçура нимĕçсем хăйсен резервĕсене çапăçăва кĕртсе пĕтерсе пычĕç. Халĕ ĕнтĕ, чи хăрушă вăхăтра, вĕсен Украинăри фронтне пĕтĕмпех аркатса каясран çăлса хăварма нимĕнле май та çук. Вырăссем хăйсен стратегийĕн пахалăхĕпе усă кураççĕ.

Финлянди правительстви Совет Союзĕн перемири тумалли условийĕсемпе килĕшмен пирки ют çĕршыв хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин дипломати ĕçĕсем çинчен çырса тăракан сотрудникĕ Рендел Нил çапла çырать: Совет Союзĕн перемири условийĕсене Финлянди правительстви йышăнманни çинчен Мускав кĕскен, уçăмлăн тата лăпкăн каласа пачĕ. Совет Союзĕн заявленийĕнче çапла каланă: «Финлянди правительстви малашне мĕн пулассишĕн пĕтĕм ответлăха хăй çине илчĕ», тенĕ. Çак сăмахсенчен Финляндин хăйĕн вывод тумалла пулать ĕнтĕ, çак сăмахсен результачĕ Финляндие питĕ вăйлăн пырса тивет пулмалла. Çав результат мĕнле пулассине Мускав тĕплĕн палăртса пама шухăшламарĕ.

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Вашингтонри çынсем Финляндипе Россия хушшинчи калаçусем путланса ларнă пирки ответлăха тӳрех Финлянди правительстви çине хураççĕ. Вашингтонра çапла шутлаççĕ: çапла асăрхаттарнă хыççăн США-н тепĕр утăмĕ — Финляндипе çыхăнма пăрахни пулмалла, теççĕ.

Америкăри хаçатсем Финлянди килĕшменни тата финсен лидерĕсем малашнехине курмасăр кутăнланса тăни пирки кăмăлсăр пулчĕç, тет корреспондент.

Венгрири лару-тăру çинчен

СТОКГОЛЬМ, мартăн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Свенска дагбладет» ятлă хаçат çапла çырать:

«Мартăн 17-мĕшĕнче Хорти кĕтмен çĕртен Гитлертан хут илнĕ. Гитлер ăна хăйĕн главнăй экспертĕсемпе пĕрле, политика тата вăрçă тĕлĕшпе ĕçлекеннисемпе, Гитлерăн главнăй квартирне пыма чĕннĕ, питĕ кирлĕ ĕçсем çинчен калаçса татăлмалла, тенĕ. Вара Хорти тата унăн экспертĕсем те Гитлер патне тухса кайнă. Мартăн 18-мĕшĕнчи каçран пуçласа, Хортипе унăн делегацийĕнчен Будапешта нимле хыпар та пыман. Çавăнпа та вĕсене Гитлерăн главнăй квартирĕнче тытса чарнă пулĕ тесе шутлаççĕ. Венгерсем нимĕçсен требованийĕсене йышăнман пирки, мартăн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тата мартăн 20-мĕшĕнче кăнтăрла та нимĕç çарĕсем Венгри территорине йышăнма пуçланă. Вĕсем Венгрие чи малтан Австри чикки урлă каçса кĕнĕ. Мартăн 20-мĕшĕнче çавăн пекех Румыни чикки урлă та каçса кĕме тытăннă. Çав вăхăтрах Гиммлерăн заместителĕ Будапештри радиостанцие тата хулари кирлĕ пунктсене йышăннă. Гиммлер заместительне ку ĕçре нимĕç гестаповецĕсемпе сыхăну офицерĕсем пулăшнă, çавăн пекех тата Венгрире пурăнакан нимĕçсем тата нацистсем майлă вырăнти çынсем те пулăшнă пулмалла.

Правительство членĕсенчен Будапештра мартăн 19-мĕшĕпе 20-мĕшĕнче палларахххи мĕн пурĕ те Каллаи министр кăна пулнă.

Хальхи вăхăтра Каллаи ăçтине никам та пĕлмест. Каллаи майлă пулса пынă Венгри радиостанцийĕ халĕ провинцире вăрттăн ĕçлет. Ку радиостанци Венгри çарĕсемпе венгер халăхне захватчиксене хирĕç тăма чĕнет. Нумай вырăнсенче Венгри çарĕсем нимĕçсене хирĕç хытă тăнă. Çавăн пекех тата венгер халăхĕпе нимĕçсем хушшинче тытăçусем пула-пула иртеççĕ, тесе пĕлтереççĕ».

«Стокгольмс Тиднинген» ятлă хаçат Венгрие оккупациленĕ пирки çапла çырать: «Стокгольмри венгерсен ушкăнĕсенче Гитлер Венгрие акă мĕншĕн йышăнмалалла тунă теççĕ: Германи лару-тăрăвĕ питех те çивĕчленсе кайнă. Балкантан килекен хыпарсем тăрăх, унти çĕршывсем, Германие пăхса тăмасăрах, хăйсемех килĕшӳ тума шутлаççĕ. Ку ĕçе Гитлер вырăссем Украинă фронтĕнче çав тери хăвăрт малалла куçса пына пирки те тунă».

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» ятлă хаçат нимĕçсем Венгрие оккупациленĕ пирки хăй редакцийĕн статьинче çапла çырать: Хĕвелтухăç фронтĕнчи катастрофа пирки нимĕçсен лару-тăрăвĕ вĕçне çитиччене çивĕчленсе кайнине Венгрие сасартăк оккупацилемелле туни пек урăх нимĕнле ĕç те кăтартса парайрас çук.

Малалла çав статьяра çапла каланă: «Хăйĕн «Европа крепоçĕнчи» хăратса тăракан мĕнпур секторĕсене хӳтĕлемешкĕн çителĕклĕ çар ăçтан тупас-ши тесе пуçне çĕмĕрнĕ вăхăтра Гитлерăн Венгрие хăй аллинче тытса тăма Хĕвелтухăç фронтĕнче çав тери кирлĕ дивизисене яма тиврĕ. Венгрие оккупацилени — малалла политика тĕлĕшпе те, вăрçă енчен те пит пысăк ĕçсем сиксе тухассине кăтартса парать».

ЖЕНЕВА, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарири радио çапла пĕлтерет: хăшпĕр пунктсенче Венгрие кĕрсе кайнă нимĕç çарĕсене хирĕç хытă тăраççĕ, халĕ çав пунктсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ.

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агенстви пĕлтернĕ тăрăх, Венгрие нимĕçсем йышăниччен Венгри правительствин премьер-министрĕ пулса ĕçленĕ Каллаи çапла каланă: нимĕçсем тытса хупасран эпĕ Будапештран тухса тартăм, тенĕ. Çапах та вăл халĕ Венгри çĕршывĕнчех, нимĕçсене хирĕç тăрас ĕçе организацилетĕп, тенĕ.

БАЛКАНРИ ТĂМ ПУКАНИСЕНЕ ГИТЛЕР ХĂЙ ПАТНЕ ЧĔНЕТ

СТОКГОЛЬМ, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). «Дагенс нюхетер» ятлă хаçат çапла пĕлтерет: лайăх пĕлсе тăракан ют çĕршыв çыннисен ушкăнĕсенче каланă тăрăх, çак çитес кунсенчех Гитлерăн главнăй ставкине Словаки президенчĕ Тисо пымалла. Çитес эрнере Гитлер ставкине Болгари государство деятелĕсем çитесе кĕтеççĕ. Юлашкинчен, Гитлерăн главнăй ставкине Недич çитмелле.

ЛОНДОН, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Вишири радио пĕлтернине парать. Унта çапла каланă: Румынин премьер-министрĕ Антонеску маршал тата премьер-министрăн заместителĕ Михаил Антонеску Гитлер ставкине кайма тухнă. Унта вĕсен пысăк ĕçсем çинчен канашлу пулса иртмелле.

НИМĔÇ ГЕНЕРАЛĔСЕНЕ ВĔЛЕРНĔ ТЕКЕН ХЫПАРСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви Стокгольмран çапла пĕлтерет: çакăн пек сас-чӳ сарăлнă: «Гитлер панă приказ тăрăх нимĕçсен Фельк, Кухс тата Гейсингер генералĕсене вĕлернĕ. Сывлăш-çар вăйĕсен генералне Гопфнера вырăнтан кăларнă. Вĕсем, тупăсемпе боеприпассем çителĕклĕ мар тесе, Днепр кукри районĕнче наступлени тума килĕшмен. Вĕсене вара çавăншăн айăпланă».

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторан — 0— 67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00537

Типография №1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. з. Тираж 15.400 экз